Муркаш район хаçачĕ

# Çĕнтерӳ ялавĕ

1944 çулхи çу уйăхĕн 5-мĕшĕнчепе тухать

79-80 (8243-8244) №№ * Юн кун, 2014 çулхи юпа (октябрь) уйăхĕн 15-мĕшĕ * Хакĕ ирĕклĕ

"Раççей – спорт çĕр-шывĕ" форум

## В. Путин М. Игнатьева тав турĕ

Октябрĕн 9-мĕшĕнче РФ Президенчĕ çумĕнчи Физкультурăпа спорта аталантарассипе ĕçлекен канашăн ларăвĕнче Раççей Федерацийĕн Президенчĕ Владимир ПУТИН Чăваш Енре демографи лару-тăрăвне лайăхлатас тĕллевпе йышăннă мерăсен комплексне пысăка хурса хакларĕ, республикăра пурнăç пахалăхне лайăхлатасси çине тата физкультурăпа спорта аталантарасси çине пысăк тимлĕх уйăрнăшăн Михаил Игнатьева тав сăмахĕ каларĕ:

"Республикăра (Чăваш Енре) 20 çул демографи кăтартăвĕ чакса пынă. 20 çул! Юлашки виçĕ çулта вара çак кăтарту çирĕппĕн хăпарнă. Ку, паллах, эпир йышăнакан пĕтĕмĕшле мерăсен результачĕ пулса тăрать. Ку вăл медицина, çĕнĕ перинатал центрĕсене хута яни, амăш капиталĕн майĕпе паракан финанс пулăшăвĕ тата демографи лару-тăрăвĕ япăхланнипе тĕл пулма тӳр килнĕ регионсен юлашки пĕрикĕ çулти пулăшăвĕ те, виççĕмĕш ача çуратма хавхалантарни те. Спортпа физкультурăна тимлĕх уйăрни те юлашки вырăнта мар.

Çак ĕçре эсир нумай çул тăрăшнăшăн сире тав тăватăп. Спортăн тĕрлĕ енĕпе ĕçлекенсем çак тĕллевпе пурнăç тăршшĕпех вăй хураççĕ, хăйсен тĕслĕхĕпе вĕсем чылай ырă ĕç тунă. Сирĕн воспитанниксен кăтартăвĕсем паха – уйрăммăн та, командăпа та, вĕсем кăмăла хускатаççĕ, çамрăксене, ытти пур ӳсĕмри çынна та спортпа туслашма хавхалантараççĕ.

Тавах сире паянхи ĕçшĕн. Паянхи калаçура сӳтсе явнисем çĕршывăн çитес пилĕк çуллăхри спорт аталанăвне палăртакан программăна кĕрĕç".

## Пурĕ – 65 пин çын

"Раççей – спорт çĕр-шывĕ" форума хутшăнма 20 çĕр-шыври тата Раççейри 81 регионти 2767 çынна аккредитациленĕ. Унта РФ Президенчĕн пулăшаканĕ Игорь Левитин, Раççей Правительствин председателĕн çумĕ Аркадий Дворкович, Пĕтĕм тĕнчери Олимп комитечĕн членĕсем, Раççей тата Пĕтĕм тĕнчери спорт федерацийĕсен ертӳçисем, Олимп чемпионĕсем 50 çын хутшăннă. Форума çутатассипе 100 яхăн федераци тата регион шайĕнчи журналист тăрăшнă. Çак тĕллевпех республикăри 100 журналист та аккредитаци илсе ĕçленĕ. РФ Президенчĕ çумĕнчи Физкультурăпа спорта аталантарассипе ĕçлекен канашăн ларăвне тӳрĕ эфирта кăтартма 60 çынтан тăракан ВГТРК телеушкăнĕ вăй хунă.

Форум вăхăтĕнче 400 специалист валли (вăл шутра 170-шĕ Чăваш Енрен) 8 мастер-класс ĕçленĕ. Форумăн спорт мероприятийĕсене май пур таран нумай çынна явăçтарас тĕллев пурнăçланнă – "çăлтăрпа" зарядка тума, Пĕтĕм тĕнчери Утассин кунне, ГТО комплексĕн нормативĕсене пурнăçлама, "Спорт бульварĕнчи" ĕç-пуçа пурĕ 65 пин çын хутшăннă.

Çак цифрăсемпе тунти кун иртнĕ правительство канашлăвĕнче Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕн Председателĕ Иван Моторин паллаштарнă. Канашлура «Раççей – спорт çĕр-шывĕ» Пĕтĕм тĕнчери форумăн пĕтĕмлетĕвне те сӳтсе явнă.

# Ирхи зарядка – чун уççи



*Куçа уçнă-уçманах Шупашкарта пурăнакансем Хĕрлĕ тӳреме пуханнă. Кунта "Россия 2" телеканалăн спорт комментаторĕпе Дмитрий Губерниевпа пĕрле вĕсем ирхи зарядка тума васкарĕç. Сакăр сехет тĕлне тӳремре ура пусма та вырăн çукчĕ. Зарядкăна Оксана Вербина ертсе пынипе фитнес-аэробика федерацийĕн воспитанникĕсем ирттерчĕç. Ӳт-пĕве усăллă хусканусене пурте пĕр пек илемлĕ те тĕрĕс пурнăçлани хатĕрленӳ ĕçне пысăк тимлĕх уйăрнине çирĕплетрĕ. Д. Губерниев вара спортпа туслисене хавхалантарсах тăчĕ, кашни кун зарядка тума, кашни минутра сывлăхпа спорт çинчен шухăшлама сĕнчĕ.*

*Тӳреме пуханнисене Чăваш Республикин Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев саламларĕ, зарядка тăвакансен йышĕнчен пулас чемпионсем тухасса шанса каларĕ.*

(Малалли 2-мĕш стр.).

Республикăра

## "Хĕвелте" пулнипе кăмăллă юлнă

Октябрĕн 9-мĕшĕнче ĕçлĕ визитпа Чăваш Республикинче пулнă май Раççей Федерацийĕн Правительствин Пуçлăхĕн çумĕ Аркадий Дворкович Çĕнĕ Шупашкарта вырнаçнă чикĕллĕ яваплăхлă "Хĕвел" обществăра пулса курнă. Кунта вăл предприятин технологи линийĕпе, инноваци проекчĕсене пурнăçа кĕртессипе, Раççейре хĕвел электростанцийĕсем туса кăларассин малашлăхĕпе паллашнă. Халĕ кунта пысăк квалификациллĕ 300-е яхăн специалист вăй хурать.

"Завод продукцине туянакансем пулаççех. Паянах ĕнтĕ заводăн япăх мар заказчиксем пур", – палăртнă Аркадий Дворкович.

Çитес çулсенче вара кунта 250 мегаватт ытла хăватлă хĕвел электростанцийĕсене Алтай, Пушкăрт республикисем, Оренбург, Омск, Саратов облаçĕсем тата ытти регионсем валли туса хатĕрлеме пуçăнма палăртаççĕ.

Савăнăç кашнине кĕтет

## Тыр-пул уявне чĕнетпĕр

**Типĕ те уяр кĕр кунĕсем уй-хир ĕçĕсене ăнăçлă вĕçлеме май пачĕç. Ыранхи кунпа пурăнакан хресчен паян çу каçа пурнăçланă ĕççене пĕтĕмлетет. Умра – районти Тыр-пул уявĕ. Муркаш енре пурăнакансене кăçал асăннă уява «Сывлăх» ФСК умĕнчи лапамра юпа уйăхĕн 17-мĕшĕнче йыхравлатпăр. Вăл ял хуçалăх предприятийĕсен "Кĕр парнисем" выставка-ярмăрkки ĕçлеме пуçланнипе 9 сехетре уçăлать.**

**Уява пыракансем суту-илӳ предприятийĕсемпе обществăлла апатлану организацийĕсен ĕçĕпе çывăх паллашма пултарĕç. Кунпа пĕрлех шкулсенчи ĕç коллективĕсен слечĕ те уява хăйне евĕр сăн кĕртĕ. Спорта кăмăллакансем мини-футболла выляса тата пăт пуканĕ çĕклессипе ăмăртса çынсен канăвне йĕркелĕç.**

**Уява пыракансен ӳкĕнмелле пулмĕ. Кăмăл пуррисем унта пахча çимĕçне те, улми-çырлине те, ашкакайĕпе утти-улăмне те, тырри-пуллипе комбикормне те, выльăхчĕрлĕхне те туянма пултарĕç. Маттур ĕçлекенĕн туллин савăнма, малашлăхпа пурăнма ирĕк пур. Пĕрле пулсан савăнăç та туллирех пулать.**

Пĕрлехи информаци кунĕ

## Ултă ял тăрăхĕнче иртĕ

Республикăри ытти районсенчи пекех, пирĕн районта та паян Пĕрлехи информаци кунне ирттереççĕ. Унăн темисем: Чăваш Республикин 2015 çулхи тата планланă 2016 çулпа 2017 çулхи бюджет политикин тĕп енĕсем çинчен; «Раççей – спорт çĕр-шывĕ» форум итогĕсем çинчен; ялсене, çул хĕррисене, масарсене тата ял тăрăхĕсен территорийĕсенчи çулсене тасатса тирпейлесси çинчен; Чăваш Республикин çулĕсем çинче 2014 çулхи 9 уйăхра аварисем пулни; 2014 – 2015 çулсенчи кĕркуннехи-хĕллехи тапхăрта Чăваш Республикин территорийĕнче пушар хăрушсăрлăхне тивĕçтерессси; район территорийĕнче преступленисем тăвассине тата правăна пăсассине асăрхаттарасси.

Района Шупашкартан Чăваш Республикин юстици министрĕн пĕрремĕш çумĕ Ирина Семенова ертсе пыракан ушкăн килет. Ушкăн членĕсем Москакасси, Муркаш, Ярославка, Ярапайкасси, Оринин, Уйкас Янасал ял тăрăхĕсене çитсе ял çыннисемпе тĕл пулусем йĕркелеме палăртаççĕ.

Граждансене йышăнаççĕ

***"Единая Россия" партин Муркашри вырăнти уйрăмĕн обществăлла йышăну пӳлĕмĕнче граждансене октябрь уйăхĕнче çак йĕркепе йышăнаççĕ:***

**Октябрĕн 17-мĕшĕнче** – Владимир Петрович Мидуков, Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн депутачĕ.

**Октябрĕн 24-мĕшĕнче** – Игорь Васильевич Николаев, район пуçлăхĕ, депутатсен районти Пухăвĕн ертӳçи, Ильич яч. хис. ял хуçалăх производство кооперативĕн председателĕ.

Граждансене асăннă кунсенче 13 сехетрен тытăнса 15 сехетчен йышăнаççĕ.

**Открылась общественная приемная местного отделения партии «Справедливая Россия» в Моргаушском районе Чувашской Республики по адресу: с. Моргауши, ул. Мира, д. 6, офис 5 (здание почты, III этаж). Прием по пятницам с 9-00 час. до 13-00 час. Тел.: 8-953-018-25-82.**

"Раççей – спорт çĕр-шывĕ" форум

# Чăваш Ен – спорт республики

## Шупашкар хăнисене – сăмах

*Раççей Федерацийĕн спорт министрĕ Виталий МУТКО:*



"Форума ирттермелли региона эпир кашнинчех тĕплĕн шухăшласа суйласа илетпĕр. Чăваш Ене ăнсăртран суйламарăмăр. Юлашки çулсенче регион лайăх аталанса пынипе палăрса тăрать. Кунта пурлăхпа техника бази те, спорта явăçнă çынсен шучĕ те ÿссех пырать. Çĕр-шывăн пĕрлештернĕ командинче те республика представителĕсем сахал мар. Чи пĕлтерĕшли – эпир пĕр пек шухăшлани тата пирĕн приоритетсем пĕрешкел пулни".

*Мускав хулин физкультурăпа спорт департаменчĕн ертӳçи Алексей ВОРОБЬЕВ:*



"Форума йĕркелени, ăна хатĕрленни тата логистика питĕ пахалăхлă. Эпĕ çак форума паянхи куна чи лайăх форумсенчен пĕри тесе хаклатăп. Çакна хăйĕн сăмахĕнче В. Мутко та палăртрĕ. Форума Раççей Президенчĕ В. Путин хутшăнни тата Физкультурăпа спорт канашĕн ларăвĕ кунта иртни Чăваш Ен хальхи вăхăтра спорт регионĕ пулса аталаннине çирĕплетет. Форум пĕтĕмĕшле Раççей Федерацийĕнче физкультурăпа спорта аталанма пулăшасса шанатăп".

*Камчатка крайĕн спорт министрĕ Андрей ИВАНОВ:*



"Форум питĕ ăнăçлă иртет. Йĕркелӳ шайĕ питĕ çӳллĕ. Çавна май эпир Шупашкарта хамăр Камчатка енне те тивĕçлипех кăтартма пултаратпăр. Пирĕн патра спортăн хĕллехи енĕсем ытларах аталанаççĕ. Çавăнпа та пĕр-пĕрин опычĕпе паллашни кăсăклă. Эсир те пирĕн пекех спорт социаллă ататланăвăн питĕ пĕлтерĕшлĕ пайĕ пулнине ăнланатăр. Кунта питĕ лайăх спорт кермене-сем, шкулсем куртăмăр, кăтартăвĕсем те чаплă. Эпир те çакăн патнех туртăнатпăр. Çавăнпа та пирĕн регионсен пĕр пеклĕх чылай".

*Мари Эл Республикин физкультура, спорт тата туризм министрĕ Владимир ЧУМАКОВ:*



"Чăваш Енре ĕçлĕ çул çӳревпе пĕрре мар пулнă. Сирĕн республикăпа савăнса тĕлĕнетĕп, çак ырă çĕр çинчен сахал мар спортсмен тухнă – Раççей тата тĕнче чемпионĕсем. Кунта çĕр-шыв тата тĕнче шайĕнчи чылай мероприяти иртет, кашнинчех чăвашсем хăнасене çӳллĕ шайра кĕтсе илеççĕ. Массăллă спорта аталантарассипе Республика Пуçлăхĕ М. Игнатьев тата унăн команди питĕ пысăк ĕç пурнăçлаççĕ. Вĕсем хăйсен ырă тĕслĕхĕпе сывă пурнăç йĕркине пропагандăлаççĕ. Форумран лайăх шухăшсем "илсе каятăп".

*Ханты-Манси автономи округĕн – Югран физкультурăпа спорт департаменчĕн директорĕ Евгений РЕДЬКИН:*



"Чăваш Енпе Ханты-Манси округĕ пĕр пекрех: пирĕн хамăрăн йăла-йĕркесем, хамăрăн кăмăл, наци хăйне евĕрлĕхĕ. Чăваш Енре мана çынсен ырă кăмăлĕ питĕ килĕшрĕ. Эпĕ кĕтменччĕ те. Полицейскисемпе волонтерсем хăйсен ĕçĕнче питĕ кăмăллă. Эпир хамăр регионa "Современный спорт. Инновации и перспективы" куравра кăтартрăмăр. Çитес çул пирĕн патра Сурдлимп ваййисем иртнине палăртрăмăр. Физкультурăпа спорт канашĕ пирĕн заявкăна ырларĕ".

### УТАКАНСЕМ – СЫВЛĂХЛĂ

Пĕтĕм тĕнчери Утассин кунне те Раççейре пĕрремĕш хут Шупашкарта ирттерчĕç. Пĕтĕм тĕнчери "Спорт – пурин валли те" ассоциаци (TAFISA) президенчĕ Джу-хо Чанг Пĕтĕм тĕнчери Утассин кунне пĕрремĕш хут 1991 çулта октябрĕн 1-мĕшĕнче ирттернине, паян çак акцие 150 çĕр-шывра хутшăннине пĕлтерчĕ. TAFISA президенчĕ Шупашкарта çак куна анлăн паллă тунипе питĕ кăмăллине палăртрĕ. Джу-хо Чангпа пĕрлех Раççей Правительствин председателĕн çумĕ А. Дворкович, РФ спорт министрĕ В. Мутко, РФ Олимп комитечĕн ертӳçи А. Жуков, ЧР Пуçлăхĕ М. Игнатьев та сăмах илчĕç, пухăннисене саламларĕç.

Пысăк хăнасем Чăваш Ен юлашки çулсенче физкультура тата спорт аталанăвĕн кăтартăвĕсемпе çĕр-шывра малта пынине палăртрĕç. Чăнах та,Чăваш Енре пурăнакансен 36 процентне яхăн спортпа туслă. 2013 çулта пирĕн республика "Раççей регионĕ" номинацире РФ Правительствин наци премине тивĕçрĕ. Физкультурăпа спорт ĕç-хĕлне йĕркелессипе РФ субъекчĕсем хушшинче икĕ çул умлă-хыçлă малти вырăнсене йышăнчĕ.

Пĕтĕм тĕнчери Утассин кунне Шупашкар хулинчен старт панипе Сочи, Красноярск, Ульяновск тата Белград хулисем те çула тухрĕç. Çак хуласенче пурăнакансемпе Шупашкартан тӳрĕ çыхăну йĕркелерĕç. Сочире хĕвел ăшши самаях ăшăтни палăрчĕ пулсан, Красноярскра вара ирхи юр пĕрчисем ӳкни курăнчĕ. Шупашкарти залив тавра çула 15 пин çын тухнине каларĕç. Хыççăнах Хĕрлĕ тӳремре зарядка малалла тăсăлчĕ. Программăна ертсе пыракансем пурĕ кунта 30 пине яхăн çын пуçтарăннине пĕлтерчĕç.

### ТӲРЕМ МĂНАÇЛĂХПА ТУЛЧĔ

Спортсменсен парачĕ – форумăн тепĕр паллă саманчĕ. Кунта Чăваш Ен мăнаçлăхĕ куç умне туллин тухрĕ. Парада Олимп, тĕнче тата Раççей чемпионĕсем хутшăнчĕç. Вĕсем Раççейĕн, Чăваш Енĕн тата Шупашкар хулин ялавĕсене çĕклесе иртрĕç. Пысăк ушкăна Олимпиада-80 палли Упа, хăвăрт утакансен 2008 çулта Шупашкарта иртнĕ Тĕнче кубокĕн палли Кăвакал тата çăмăл атлетика енĕпе 2015 çулта ирттерме палăртнă Европа чемпионачĕн талисманĕ Çăлтăр ертсе пычĕç. Тӳремпе пĕрин хыççăн тепри Чăваш Ен спортсменĕсем, тренерĕсем, спортăн тĕрлĕ федерацийĕпе ассоциацийĕн представителĕсем, спорт шкулĕсенче вĕренекенсем, ветерансем утса иртрĕç. Самбо, дзюдо, бокс, футбол, тхэквондо, гимнастика тата ытти федераци воспитанникĕсем хăйсен пултарулăхĕпе паллаштарчĕç.

### УНТАЛЛА ПĂХСАН ТА – СПОРТ, КУНТАЛЛА ПĂХСАН ТА – СПОРТ

Çак вăхăтра Шупашкарти тĕп урамăн икĕ енĕпе спорт бульварĕ ĕçлерĕ. Чăваш Енри спорт федерацийĕсемпе спорт шкулĕсем пурĕ 30 ытла площадкăра хăйсен ĕçĕ-хĕлĕпе паллаштарчĕç. Кунта баскетболла вылякан та, аэробика ташшине кăтартакан та, мини-гольфра хăйне тĕрĕслекен те – такам та пурччĕ. Пĕр çĕрте спорт машинисем сĕрлени хăлхана çуратчĕ пулсан, тепĕр вырăнта каратэне килĕштерекенсем кĕрешӳсенче хутран-ситрен кăна сас кăларатчĕç – спортăн паллисем кашнин хăйĕн. Çак бульварта тренерсемпе вĕсен воспитанникĕсем тĕрлĕ мастер-классем ирттерчĕç.



Мускав облаçĕн экспозицийĕнче – воркаут – массăллă спорт тĕсĕ.

### ПĔР-ПĔРИН ОПЫЧĔ – КУРАВРА

Республика лапамĕнче вырнаçнă павильонсенче (Правительство çурчĕ умĕнче) "Современный спорт. Инновации и перспективы" Пĕтĕм тĕнчери пиллĕкмĕш курав ĕçлерĕ. Кунта çĕр-шыври регионсенчи спорт аталанăвне сăнлакан, спортăн пурлăхпа техника бази пирки каласа паракан, ГТО комплексне чĕртсе тăратассипе çыхăннă тата ытти экспозицие паллашма май пулчĕ. Регионсен спорт аталанăвĕн опычĕсемпе те кунтах паллашма пултарчĕç. 2018 çулта Раççейре футболла выляссипе тĕнче чемпионачĕ иртмелле, 2015 çулта Хусанта шыв çинчи спорт енĕпе тĕнче чемпионачĕ ирттерме палăртнă, 2019 çулта Красноярск хули Пĕтĕм тĕнчери хĕллехи универсиадăна йышăнĕ – çакăнпа тата ыттипе те пĕтĕмпех регионсем йĕркеленĕ информацие курав кĕтесĕсем паллаштарчĕç. Куравра – пур çĕрте те спорт, çитес ăмăртусен атмосфери хуçаланчĕ.

### ГТО – ÇĂМĂЛЛĂН!

Спортпа туслисем ГТО комплексĕн нормативĕсене пурнăçлама пултарнине "Спартак" стадионта çирĕплетсе пачĕç. Савăнăçлă лару-тăрура уçнă мероприятие РФ спорт министрĕн çумĕ, Олимп чемпионĕ Павел Колобков, министерствăн физкультурăпа массăллă спорт аталанăвĕн департаменчĕн ертӳçи Марина Томилова, ЧР спорт министрĕн çумĕ Алексей Яковлев, Шупашкар хула администрацийĕн пуçлăхĕ Алексей Ладыков хутшăнчĕç. Кунта 6 çулти ачасенчен пуçласа 70 урлă каçнă ветерансем хăйсене тĕрĕслерĕç. Вĕсене хавхалантарма РФ Патшалăх Думин депутачĕ Николай Валуев та çитрĕ. Хăйĕн хăшĕ вăл ГТО комплексне чĕртсе тăратма шутланине ырларĕ. Шупашкарта ГТО нормативĕсене пурнăçлама пур ӳсĕмри çын та хутшăннипе кăмăллă пулчĕ. Çак программа 2017 çулта пур регионта та (хальлĕхе 12 регионта) старт илессине палăртрĕ.

Пирĕн районти çамрăксемпе ветерансем те "Спартака" çитрĕç. Иван Кабуркин, Аверкий Васильев, Раиса Сафонова, Анна Васильева ветерансем паян та "стройра". "Хускануcем туса хамăра йĕркеллĕ формăра тытса тăратпăр. Паянхи уява хавассах килтĕмĕр", – хăйĕн шухăшĕпе паллаштарчĕ Аверкий Васильевич.

Тивĕçре çуралса ӳснĕ Виталий Павлов та хăйĕн ирĕкĕпе ГТО нормативĕсене пурнăçлама çитнĕ. "Хамăн шалти туйăмпа пысăк шанăçпа килтĕм", – пĕлтерчĕ спортăн çамрăк ветеранĕ.

ГТО нормативĕсене спортпа туслă çын çăмăллăнах пурнăçлама пултарать. Кăна хам та тĕрĕслесе пăхрăм. "Ылтăн" значока тивĕçмелле кăтартусемшĕн шкулта физкультура урокĕсене ертсе пынă Аверкий Васильевича тав тăватăп.

### ЛАРУ, КОНФЕРЕНЦИ, КАНАШЛУ...

"Раççей – спорт çĕр-шывĕ" форумăн иккĕмĕш кунĕ те ĕçлĕ тĕл пулусемпе, тĕрлĕ конференципе, ларусемпе пуян пулчĕ. Ача-пăча пултарулăх керменĕнче акă спорт резервĕсене хатĕрлесси пирки хĕрӳ каласрĕç, аталану çулне сӳтсе яврĕç. Конференци ĕçне В. Мутко тата М. Игнатьев та хутшăнчĕç. Çав кунах вĕсем журналистсем валли пресс-конференци ирттерчĕç. Унти калаçăва пĕтĕмлетнĕ май В. Мутко Чăваш Енри ырă улшăнусем çинче чарăннине палăртмалла. Ыйтусене хуравланă май вăл форума малта пыракан регионсенче ирттересси тĕп позици пулнине каларĕ. "Чăваш Енĕн кăтартмалли те, каласа памалли те пур. Чи пĕлтерĕшли – эпир пĕр пек шухăшлани тата пирĕн приоритетсем те пĕрешкел пулни", – терĕ министр.

Çак кун, октябрĕн 10-мĕшĕнче, Шупашкарти Самбо керменĕнче Пĕтĕм тĕнчери спорт форумне пĕтĕмлетекен пленарлă лару иртрĕ. В. Мутко форум çӳллĕ шайра, пур мероприяти те ăнăçлă иртнине палăртрĕ. "Пирĕн питĕ нумай событи пулчĕ. Эпир – куçа курăнакан отрасль представителĕсем, пирĕн çинче яланах пысăк ответлăх", – тесе вăл спорт общественноçне тав турĕ.

М. Игнатьев хăйĕн сăмахĕнче массăллă спорта аталантарасси тата çĕр-шывăн пĕрлештернĕ командисем валли спорт резервĕсем хатĕрлесси тĕп задача пулнине пĕлтерчĕ.

Физкультурăпа спорта аталантарассинче тивĕçлĕ ĕçсем туса палăрнисене лару вĕçĕнче Раççей Федерацийĕн тата Чăваш Республикин наградисемпе чысларĕç. РФ субъекчĕсенче физкультурăпа спорт ĕç-хĕлне йĕркелессипе Пĕтĕм Раççейри смотр-конкурсра 2-мĕш вырăн йышăннăшăн Чăваш Республикине РФ Спорт министерствин Кубокĕпе тата Хисеп грамотипе наградăларĕç.

Район администрацийĕн пуçлăхĕ Ростислав Тимофеев та форум ĕçне пĕтĕмлетекен пленарлă ларăва хутшăнчĕ.



Экспозицисенчен пĕринче – ГТО комплексĕн историйĕ

**Н. НИКОЛАЕВА.**
**Автор сăн ӳкерчĕкĕсем.**

Патшалăх пулăшăвĕ

# Кĕтнĕ пысăк савăнăç



*Çак эрнере пирĕн районти черетлĕ ултă çамрăк çемье "Пурăнмалли çурт-йĕр" федераци тĕллевлĕ программăн "Çамрăк çемьесене пурăнмалли çурт-йĕрпе тивĕçтересси" хушма программине хутшăнса субсидие тивĕçни çинчен алла свидетельствăсем илчĕ. Хăшĕсем çак телейлĕ саманта 4 çул, теприсем вара унтан та ытларах кĕтнĕ.*

*Çапла вара çулталăк пуçланнăранпа районти 38 çамрăк çемье çак пулăшăва тивĕçрĕ. Район администрацийĕн пуçлăхĕ Р. Тимофеев çемьесене саламланă май çак хисеп малтанхи çулсемпе танлаштарсан виçĕ хут майлах пысăкланнине палăртрĕ. Çамрăксене хăйсем çине илнĕ обязательствăсене пурнăçламаллине асра тытма сĕнсе вăл кашнинех свидетельство пачĕ.*

*Çемьесенчен пĕри – Çатракасси ял тăрăхĕнче пурăнакан Шутеевсен çамрăк çемйи (сăн ӳкерчĕкре). "Кĕтнĕ пысăк савăнăç çитрĕ", – теççĕ Юрийпе Наталья. Свидетельство вĕсемшĕн пысăк пулăшу пулнине палăртса патшалăха тав тăваççĕ. Вĕсен Кристина хĕрĕ те хăйĕн пурнăç условийĕсем татах та лайăхрах пулассине чухлать.*

**Н. НИКОЛАЕВА сăн ӳкерчĕкĕ.**

Логопед сĕнет

# Ачан калаçăвĕ тĕрĕс аталантăр

Ачан пуплевĕ кулленхи калаçура аталанса пырать. Сасăна тĕрĕс кăларма вĕренесси, чĕлхери кашни сасса тĕрĕс каласси, сăмаха литература чĕлхинчи пек калама пĕлнине çирĕплетесси вара воспитательтен нумай килет, мĕншĕн тесен воспитатель ачасемпе кунĕпе калаçать. Çав хушăрах вăл – логопедăн пĕрремĕш пулăшаканĕ те, ачапа воспитатель тачă çыхăнса ĕçлет. Логопед сĕннине воспитатель малалла йĕркелесе пырса ачапа тачăрах тимлеме пуçлать.

Ашшĕ-амăшĕнчен вара çапла каланине илтме пулать: ачасем килте питĕ лайăх калаççĕ, тĕрлĕ ыйту парса çĕннине пĕлме тăрăшаççĕ, анчах та вĕсем садикра хăйсене мĕншĕн-ха именчĕклĕн тытаççĕ тата сахалтарах калаççĕ? Ĕç опытĕнчен илес пулсан вĕренӳ вăхăтĕнче чи малтан тата тĕрĕс хуравлакан ачасенчен килте пуринпе те кăсăкланакан ачасем нумайрах пĕлеççĕ. Ача хăйне килте те, садикра та çирĕп те шанчăклă тыттăр тесен ашшĕ-амăшĕн те унпа нумай ĕçлемелле, вĕсен те ача садĕнче мĕн хушнине пурнăçламалла. Мĕнле тата мĕнпе пулăшмалла-ха садика çӳрекен пĕчĕк те черченкĕ ачана? Çакăнта ĕнтĕ воспитатель ачан чи пĕрремĕш пулăшаканĕ пулса тăрать. Эпĕ логопед пулнă май воспитательсене çак ĕçре хăш-пĕр сĕнӳ парасшăн. Чи малтан ушкăна çӳрекен пур ачана та ирхине садика кĕтсе илнĕ май воспитателĕн ачасем ĕнер уçăлса çӳренĕ вăхăтра е килтен килнĕ чух мĕн курнине, килте мĕн тунине аса илтерме тăрăшмалла, кун пек калаçу воспитательпе ача хушшинчи çыхăнăва çирĕплетет, ача хăйне пĕр çемьери пек туять. Ирхине, ачасем сахалтарах чухне, воспитатель килнĕ ачасемпе тутапа, чĕлхепе тĕрлĕ хăнăхтару тутарма пултарать. Вĕсем "лаша", "варени çиетпĕр", "слон", "шапа", "маляр", "сехет" тата ытти хăнăхтару тума пултараççĕ. Кунсерен алăсемпе, пӳрнесемпе ĕçлени те ачан пуплевне аталантарассинче пысăк вырăн йышăнать. Уйрăмах пластилинран, тăмран йăваласси, пӳрне вĕçĕсемпе усă курса ӳкерессине тата ытти те.

Ачана мĕн пĕчĕкрен илемлĕ литературăна юратма вĕрентмелле. Çак тĕллевпе ачасене текст тăрăх панă ыйтусене хуравлаттармалла, юмах, сăвă, калав содержанине кĕскен калама вĕрентмелле. Каçхине вара пĕр-пĕр юмаха аса илсе пĕр-пĕр роль шанса памалла. Ытлашши пуçаруллă ачасем хăйсен юлташĕсен пуçарулăхне ан пусарччăр тесе воспитателĕн хăюсăр та вăтанчăккисене пĕрлехи вăййа хутшăнтармалла. Ача уçăмлăн та таса калаçма пĕлнине сăнамалла, сасă вăйне тума, унпа тĕрĕс усă курма хăнăхтармалла. Уçăлма тухсан та паянхи кун çинчен, иртнĕ вăхăтра вĕреннĕ сăвăсем çинчен аса илмелле, ача хăйне ыттисем пекех пултаруллă тесе шухăшлатăр.

Сахал тата япăхрах калаçакан ачасене мухтама манмалла мар. Вĕсем хăйсен калаçăвĕшĕн ахаль те вăтанаççĕ. Ачасем калаçу вăхăтĕнче хăйсене ирĕклĕ те вăтанмасăр тытма хăнăхчăр тесе воспитателĕн чунне парса ĕçлемелле.

**Елена МИХАЙЛОВА, логопед.**

# "Эпĕ пире вĕрентнĕ учитель пек пулма тăрăшрăм"



**Муркашра пурăнакан Галина Борисовăна чылайранпах пĕлетĕп. Вăл пур енлĕ маттур çын пулнине шута илсе унпа калаçма васкарăм.**

– Кашни професси пархатарлă, çапах та пурнăçа вĕренӳ сферине халалларăм. Çакă пире вĕрентнĕ учитель пек пулма ĕмĕтленнипе çыхăннă пулĕ. Шкулта биологи, ботаника, хими урокĕсене Тамара Алексеевна Анисова вĕрентетчĕ. Ăна уйрăмах кăмăллаттăмччĕ, питĕ ун пек пулас килетчĕ, – калаçăва пуçларĕ Галина Захаровна.

1965 çулта шкултан вĕренсе тухнă хĕр аслă вожатăйра тимлеме пуçлать. Хăй пурнăçĕ вĕренӳ ĕçĕпе çыхăнассине аванах туять Галя, малашлăхне те шкулта курать, çавăнпа та тăтăшах шкул ĕçĕ-хĕлĕ пирки калаçать. Ашшĕ вара Захар Магаев районти тĕп больницăра тĕп бухгалтерта тимлекенскер, хăйĕн хĕрне чунтанах тухтăр тăвасшăн тăрăшать, Гальăна медицина енĕпе аслă пĕлӳ илме çине тăрса ӳкĕтлет. Анчах та çамрăкскерĕн ку еннелле чунĕ туртмасть. Мĕн ĕмĕтленнине яланах пуçра тытнипе тепĕр икĕ çултан Чăваш патшалăх педагогика институтне çул тытать. Биологипе хими учителĕ пулма хатĕрленет. Кунта вăл тăрăшулăхпа тата пуçарулăхпа ыттисенчен уйрăларах тăрать. Вĕрентекенсем те ăна ыттисем умне тĕслĕхе лартаççĕ.

Акă хыçра – студент пурнăçĕ, умра – ĕç ĕмĕрĕн пуçламăшĕ. Алла диплом илнĕ çамрăк специалиста Елчĕк районĕнчи Аслă Таяпа шкулĕнче ĕçлеме сĕнеççĕ. Каллех тăван килтен аякка каймалла. Ашшĕ-амăшĕ хĕрне çĕнĕ ĕçе пикенме пиллет.

– Ачасем ун чухне питĕ йышлăччĕ. Мана тӳрех 10-мĕш класс ертӳçи пулма шанчĕç. Учительсем каланă тăрăх унта ытла та хăюллă ачасем иккен. Шикленме те пĕлмерĕм пулас чи малтанах. Класа ертсе пыма йышăнса ĕçлесе пăхма шухăшларăм. Вăл вăхăтра ачасем учительсене урăхларах йышăнатчĕç, – аса илет Галина Захаровна иртнĕ çулсене.

Ачасемпе çамрăк учитель хушшинче часах ăнлану çуралать. Концерт программисем, литература каçĕсем йĕркелеççĕ, тĕрлĕ конкурспа мероприятие хутшăнаççĕ. Çак класс ачисемпе стена хаçачĕ кăларнипе район шайĕнче пĕрремĕш вырăн тивĕçнине те асрах тытать-ха хисеплĕ ветеран. Пултарулăхпа палăракан вĕрентекене район шайĕнче тата унти коллектив часах асăрхать. 1984 çулта унăн ĕçне Раççей шайĕнчи чыславпа – "Аслă учитель" ятпа – хакланă. Ĕçлемелле те ĕçлемелле ĕнтĕ пĕр хăнăхнă шкулта, анчах вăхăчĕ çапла килсе тухать. Шăпа çамрăк мăшăра тăван вырăна – Муркаш тăрăхне – илсе çитерет.

Ун чухне районти вĕренӳ ĕçне Виталий Толстов йĕркелесе пынă. Вăл нумай шухăшласа тăмасăр пысăк опыт пухма ĕлкĕрнĕ учителе вĕренӳ пайне ĕçлеме йышăннă. Галина Захаровна Оринин шкулĕнче хăй валли ĕç вырăнĕ тупнă та ĕнтĕ. Çапла вара пĕр харăсах икĕ ĕçре тимленĕ вăл. Каярах та хăйне тĕрлĕ енпе тĕрĕсленĕ.

– Пушă вăхăчĕ пачах та пулман тесен йăнăшмастăп пулĕ. Тăтăшах шкулсене тĕрĕслевпе тухса çӳренĕ, урок итлеме кайнă, – калаçăва тăсать вăл.

Пархатарлă ĕçне кура хисепĕ те чыслă: ăна Раççей Федерации шайĕнчи наградăсемпе те палăртнă.

Ал ĕçĕ енĕпе те питĕ ăста Галина Захаровна. Кружок ертсе пынă май хĕр ачасене крючокпа тĕрлĕ эреш çыхма вĕрентнĕ, аслă çулхисем те çак ĕçпе кăсăкланнă. Ал ĕçĕпе аппаланнисĕр тата хушма хуçалăхра вăй хунисĕр пуçне вăл ветерансен хорне çӳрет. Унăн çепĕç сассине итлеме питĕ кăмăллă. Çакăн пек пултаруллă çын вăл Галина Захаровна.

**Р. ИЛЛАРИОНОВА.**

Шкулсенче

# Чăн-чăн урна, бюллетень



*"Çак суйлав пурнăçра эпир хамăр хутшăнакан суйлав пекех пултăр, çамрăксен суйлава хутшăнас активлăхĕ пысăк пултăр тесе тăрăшрăмăр", – палăртать районти çамрăксен суйлав комиссийĕн председателĕ Геннадий Любимов Муркашри вăтам шкулти "УЮТ" республикин президентне суйлани пирки калаçнă май.*

*Çамрăксен суйлав комиссийĕн членĕсем шкул директорĕн воспитани енĕпе ĕçлекен çумĕпе Н. Казаковăпа маларах тĕл пулса калаçрĕç. Çавăн хыççăн вĕсем шкулти списоксем тăрăх суйлавçăсен журналне, бюллетеньсене пичетлесе хатĕрлерĕç. Л. Тарасова ертсе пыракан Муркашри территори суйлав комиссийĕ шкулти суйлава май пур таран çӳллĕ шайра ирттерме витĕр курăнакан урнăсемпе те, суйлавçăсен кабинкипе те тивĕçтерчĕ. Шкулта вара 11 класра вĕренекенсенчен тăракан суйлав комиссине йĕркелесе хучĕç. Президент пулма тăратнă кандидатсем ятарлă дебатсене хутшăнса суйлавçăсене хăйсен программисемпе тĕплĕн паллаштарчĕç. Иртнĕ эрнере, ытлари кун, суйлав иртрĕ.*

*Шкулшăн пĕлтерĕшлĕ ĕç-пуça уроксем хушшинчи пысăк тăхтавсем вăхăтĕнче пурнăçларĕç. Хатĕрленĕ 470 бюллетеньрен (кашни бюллетеньре 6 кандидат) ачасем, 6–11 классенче вĕренекенсем, 399-шĕпе усă курнă, вĕсенчен 3-шне суйлав комиссийĕ чăн мар тесе йышăнчĕ.*

*Шутлав ирттернĕ хыççăнхи пĕтĕмлетӳпе "УЮТ" шкул республикин президенчĕ 9 "б" класра вĕренекен Елена Григорьева пулса тăчĕ. Апла унăн хăйĕн программине çине тăрсах пурнăçлама, шкул ачисен пурнăçне интереслĕрех тăвас тĕллевпе халех вăй хума тытăнмалла.*

**Н. НИКОЛАЕВА.**

# Ĕмĕтсем пĕр тĕллевлĕ пулччăр

Пирĕн пата çыраççĕ

Юлашки çулсенче çĕр-шыв ертÿçисен пуçарăвĕсене çул парса вырăнсенче те общественна организацисемпе ĕçлесси çине ытларах тимлĕх уйăрма пуçларĕç. Пирĕн паянхи сăмах – инвалидсен районти обществăлла организацийĕн ĕçĕ-хĕлĕ пирки.

Пирĕн йыш питĕ пысăк мар пулин те тĕллевĕмĕрсем, пурнăçлас ĕç ĕмĕчĕсем район аталанăвĕшĕн пулнине пытармастпăр. Хамăр обществăлла организацин пурнăçĕпе паллашма, пурнăçланă ĕçсене пăхса тухма, калас сăмахсене палăртма иртнĕ уйăх вĕçĕнче Муркашри вăтам шкул библиотекинче "Кĕр парнисем" темăпа çавра сĕтел ирттертĕмĕр.

Тĕл пулăва 27 инвалид пухăнчĕ. Пирĕнпе курса калаçма Чăваш Республикин Сывлăх сыхлавĕпе социаллă аталану министерствин районти хÿтлĕх пайĕн ертÿçи В. Аникина, районти социаллă пулăшу па тивĕçтерекен центрăн директорĕ О. Иванова, районти тĕп больницăри И. Софронова врач-эндокринолог тата пенси фончĕн вырăнти специалисчĕсем хутшăнни калаçăва нумай енлĕ йĕркелеме пулăшрĕ.

Çавра сĕтеле хутшăнма кашни инвалид хăйĕн ăсталăхĕпе пултарулăхне явăçтарчĕ. Çавăнпа та хамăр тĕллĕн ăсталанă апат-çимĕçпе улма-çырла выставкине хутшăнакансем çак кун хăйсен анлă тавра курăмне кăтартрĕç. Хамăр хушăмăртах йĕркеленĕ жюри членĕсем конкурса хутшăнакан кашни ĕçе тĕплĕ тишкерсе тивĕçлĕ пĕтĕмлетÿ турĕç. Çапла вара пĕрешкел условисенчех чи ăстараххи В. Кольцова пулчĕ тесе çирĕплетрĕмĕр. Çимĕçсем пĕсерсе пынипе, вĕсене илемлетнипе, пахча çимĕçрен кĕлеткесем ăсталанипе Л. Николаева, Р. Николаева, М, Пушкарева, З. Бандо, Н. Кошкина ĕçĕсем те ырă ята тивĕçрĕç.

И. Софронова тухтăр пире сывă пурнăç йăли-йĕркипе, чир-чĕрпе кĕрешессипе, апатлану йĕркипе, спортпа туслă пулмаллипе уйрăм тĕслĕхсемпе паллаштарчĕ, интереслĕ те кăсăклă калаçу ирттерчĕ, хамăра та унта активлă хутшăнтарчĕ.

Пенси фончĕн специалисчĕсем пирĕн нумай ыйту çине вырăнлă хуравсем пани те инвалидсемшĕн пысăк тĕкĕ пулчĕ.

Çак тĕл пулура эпир хамăра тата районта пурăнакан нумай çынна канăçсăрлантаракан ыйтăвĕсене те хускатмасăр хăвармарăмăр. Сăмах – тăван тавралăх пуянлăхне упрасси, унпа пурте пĕр пек усă курасси пирки. Эпир хамăр хушăмăрти туслăха çирĕплетес, пушă вăхăта усăллă ирттерес тĕллевпе ял тăрăхĕсене тухса час-часах пулăшсен ăмăртăвĕсене ирттеретпĕр. Çак юхăмăн вăйĕ ан пĕттĕр, вăл ытларах аталантăр тесе районти плотинасене хамăр укçапа туяннă вĕтĕ пулăсене те сахал мар яратпăр, анчах... Пĕрисен мал ĕмĕтне теприсем пĕл шелсĕр таптани пире питех те пăшăрхантарать. Пирĕн чун кăшкăрнине хаçат вулакансем ăнланасса шанса çыратпăр.

Пире хумхантараканни – пĕве-плотинасенчи пулăсене электровăлтасемпе тытни. Унпа усă курнă вырăнсенче пулă вăлча сапма пăрахать, йышлă вилет, тăван тавралăх куç умĕнчех чухăнланса юлать...

Хамăр тавралăха хамăрăн упрасчĕ, ыранхи пирки, хамăр хыççăнхи ăру çинчен пурсăмăрăн та пĕрле шухăшласчĕ.

**А. КУЗНЕЦОВ,**
**Ю. ЩЕГОЛЬКОВ.**
Муркаш сали.

# "Янташ" ушкăнра – пирĕн ентеш

**"Эпĕ пĕлнĕ тăрăх Шупашкарти "Янташ" чăваш эстрада ушкăнĕнче пирĕн район каччи Николай Кузьмин артист пур. Вăл хăш ялтан-ши, миçере-ши? Ку ыйту мана кăна мар, ыттисене те кăсăклантарать. Пултарулла çамрăк çинчен "Çĕнтерÿ ялавĕ" хаçатра çырса кăтартма тата сăн ÿкерчĕкне кăларма ыйтатăп."**
**Мария Кошкина. Уйкас Янасал ялĕ.**



"Янташ" ушкăнри артист Николай Кузьмин чăннипех те пирĕн районтан. Автор кăмăлне тивĕçтерес тесе Николай Кузьмина редакци тĕпелне килме ыйтрăм. Вăл калаçăва хутшăнма кăмăл турĕ.

– Чи малтанах вара ман пултарулăхпа кăсăкланакан çынсене тав сăмахĕ калас килет. Юрăкĕвĕне юрататăр, ун пек чухне пăшăрханни те хăвăртрах иртĕ, пусăрăнчăк кăмăл та наччасрах усăлĕ, – пуçларĕ калаçăва вăл.

Эстрада юрăçи Катькас ял тăрăхне кĕрекен Кĕрекаç ялĕнче 1990 çулта çуралнă. Шкулта вĕреннĕ çулсенчех пултарулăхпа тата тăрăшулăхпа ыттисенчен уйрăларах тăнă. Тĕтăшах тĕрлĕ конкурса хутшăннă, юлашки классенче вара ăна кружок ертсе пыма шаннă, тĕпчев ĕçĕсем ирттернĕ тата ытти те.

Шкултан вĕренсе тухнă хыççăн Шупашкарти кооператив техникумĕнче пĕлÿ илнĕ. Кунта та вĕренÿпе обществăлла ĕçе пĕр тан уттарнă. Анчах та пултарулăхĕ унăн урăх еннелле ытларах сулăннă пулас. Юрă-кĕвĕ ăсталăхĕ яланах çумра пулнă яш çар ретĕнче пулнă хыççăн филармони çумĕнчи "Чăваш ен" ансамбле çул тытать, çав хушăрах хăй пултарулăхне театр сцени çинче те тĕрĕслет. Манăн ыйтăва вăл ăнланчĕ тейĕн.

– Пирĕн йăхра юрă-кĕвĕ туртăмĕ тахçантанпах пырать. Кукаçи хут купăссă пулнă, анне ыттисемпе пĕрле тĕрлĕ концерт программипе куракан умне тăтăшах тухнă. Эпĕ вара вĕсен ĕçне малалла тăсатăп, – шухăшне палăртрĕ Николай Кузьмин.

Икĕ çул каялла вăл "Янташ" ушкăна илемлĕх кÿме пуçланă. Ăста солист пултарулăхне асăрханă, çак ушкăна ертсе пыма шаннă.

– Пирĕн ушкăн ултă артистран тăрать. Республика тулашĕнче тăтăшах пулатпăр, çитмен тăрăх сахал та пулĕ, – калаçăва тăсрĕ вăл.

Николай Кузьмин тĕрлĕ конкурспа фестивале хутшăнса çĕнтерÿçĕ пулса таврăнать, çавăн пекех лауреат пулнипе "Янташ" ушкăн ят-сумне çÿле çĕклет.

**Р. ИЛЛАРИОНОВА.**

# Тĕрлĕ çип илемлĕх тĕнчине куçать

Пултарулăх



***Сăн ÿкерчĕкре Муркашра пурăнакан Татьяна Соловьевăна куратăр. Вăл – ал ĕç ăсти. Ачаллах тĕрлĕ эреш çыхма хăнăхнăскер мĕн кăна ăсталамасть пулĕ. Тури чăвашсен музейĕнче Татьяна Юрьевна эрешленĕ пуканесен черетлĕ ушкăнне куракан умне кăларнă. Унăн ĕçĕсем тĕрлĕ мероприятие илем кÿреççĕ.***

***Хамăр патри экологи тĕлĕшĕнчи таса продукци пахалăхĕ пирки юлашки тапхăрта тăтăшах калаçаççĕ. Татьяна Юрьевна ăсталанă пуканесем те çавăн йышшисем, вĕсем пур енлĕ ăнăçлă.***

***– Ют тăрăхрисем ача-пăчашăн хăрушлăх кăларса тăратаççĕ пулсан кусем пирки пачах та иккĕленмелле мар. Алă çумне тĕрлĕ тĕс çыпăçмасть, клей йышши хими препарачĕпе усă курман, вĕсем çумĕнче нимĕнле сиенлĕх те çук, – паллаштарать ăстаçă.***

***Вăл хăй те тăватă ача амăшĕ пулнăран ку тĕлĕшри вăрттăнлăха питĕ аван ăнланать. Çавăнпа та вăл кашни эреше çепĕç туйăмпа ункăлани, лăпкăлăх туйăмĕ çуратма пултаракан тĕссемпе усă курни аван палăрать. Мана вара пĕр ыйту канăç памарĕ, куллен ĕçе васкакан çыннăн вăхăчĕ ăçтан тупăнать-ха?***

***– Кун каçа ĕçре, кил-тĕрешре питĕ ывăнатăп. Çавăнпа та кăштах та пулин канса илес тесе алла çип тытатăп. Мĕн кăна çыхман пулĕ, утиялне те тата ыттине те. Тепĕр чухне кăмăл пусăрăнчăкне те унпах сиретĕп, – каласа парать халĕ аптекăра вăй хуракан Татьяна Юрьевна.***

***Унччен вара вăл ача садĕнче вăй хунă. Унта ĕçленĕ чухне те тĕрлĕ мероприятие тăтăшах хутшăннă. Кунта тимлекен çыннăн вара тавра курăмĕ питĕ анлă пулнине аван пĕлетпĕр. Хăй ăсталăхне вара маттур хĕрарăм вăрттăнлăхра тытмасть, кăмăл тăвакансене хаваслах вĕрентет.***

**Р. МАКАРОВА сăн ÿкерчĕкĕ.**

# В. Вастрюков 75 çул тултарчĕ

Пирĕн паллă ентеш

Октябрĕн 1-мĕшĕнче космонавтика тата космос çарĕн ветеранĕ, Раççейĕн тава тивĕçлĕ конструкторĕ, пирĕн ентеш, чылай орден тата медаль хуçи Варсонофий Вастрюков 75 çулхи юбилейне паллă тунă.

Çавна май район администрацийĕн пуçлăхĕ Ростислав Тимофеев хисеплĕ çыннăмăрпа калаçнă, ăна çуралнă кунĕ ячĕпе саламланă.

– Эпир хамăр районтан тухнă, Тăван çĕр-шыв ăнăçлăхĕшĕн вăй хунă çынсемпе хăпартланатпăр, – çапла пуçланă Ростислав Николаевич салам сăмахне.

Варсонофий Вастрюков Ильинка ял тăрăхне кĕрекен Мăн Шашкар ялĕнчи хресчен çемйинче çуралса ÿснĕ. Вăл икĕ çулта чухне ашшĕ, Федор Григорьевич, фронта кайнă, анчах та вăл унтан таврăнайман. Амăшĕ, Федосия Игнатьевна, ачасене пĕчченех ÿстернĕ. Арçын ача 1946 çулта вăл шкулта вĕренме пуçланă. Унта Варсонофий пуçарулăхпа палăрнă май ăна тĕрлĕ ĕç шаннă.

Шкултан вĕренсе тухсан каччă 1956 çулта электромеханика техникумне çул тытнă. Унтан лайăх паллăсемпе вĕренсе тухнă май ăна Томск хулине направлени панă. Çапла вара вăл кунçулне космос техникипе оборудованийĕ хатĕрлессипе çыхăнтарнă. Кăткăс ĕçре хисеплĕ çыннăмăр алă çул ытла тимлет. Халĕ Варсонофий Федорович Томск хулинче пурăнать.

Питĕ пултаруллă та тавçăруллă пулнăран çак ĕçре вăй хума пуçлани икĕ çул иртсенех вăл ертсе пыракан конструктор пулса тăрать, аслисен шанăçне тÿрре кăларать. Каярах вара лабораторири ертÿçинче тимлеме пуçлать. Пултаруллă специалист пусăм хыççăн пусăм çÿле улăхать. Çамрăксене пулăшма тăрăшать, аслисенчен хăй тĕслĕх илет. Çапла вара Варсонофий Федоровича "Полюс" НПЦ конструктор бюроне ертсе пыма шанаççĕ. Вăл тивĕçнĕ чыславсене асăнса та пĕтерме çук – питĕ йышлă вĕсем. Хисеплĕ çыннăмăр пирĕн районпа çыхăну тытать. Варсонофий Федоровича сума сăвакан тата ăна пĕлекен çынсем аякри хулана ăшă салам яраççĕ.

**Р. ИЛЛАРИОНОВА.**

Ыр кăмăллăх

# Мăн Сĕнтĕр пирки кĕнеке кăларасчĕ

Эпĕ, Валерий Ивановский, Мăн Сĕнтĕр тăрăхĕнчен. А.М. Горький ячĕллĕ институтра вĕреннĕ хыççăн 25 çул ытла "Промтрактор" УАОра ĕçлерĕм, вăл шутра 16-не инженер-конструкторта вăй хутăм.

Вăхăчĕ çапла килсе тухрĕ, эпĕ хамăн пурнăçа кĕнеке çырса кăларассипе çыхăнтартăм. Чи малтанах икĕ томран тăракан "Чăваш халăх календарĕ" кĕнеке кун çути курчĕ. Ку издани уйрăмах шкулта вĕренекенсемшĕн, учительсемшĕн, культура ĕçченĕсемшĕн питĕ усăллă, ыттисемшĕн те кăсăклă.

Черетлĕ тепĕр кăларăмра вара медицина терминĕсене тишкертĕм, унтах сывă пурнăç йĕрки пирки, сывлăхлă пуласси вăрттăнлăхĕ çинчен çыртăм. Çакна калăпласси ăсĕртран пулмарĕ. Асатте, Егор Ивановский, хăй пурнăçне сывлăх сыхлавĕпе тачă çыхăнтарнă, Мăн Сĕнтĕр больницинче те тимленĕ. Маншăн та медицина ют мар.

Халĕ вара хамăн тăван Мăн Сĕнтĕр тăрăхĕ пирки пуян содержаниллĕ черетлĕ кĕнеке кăларма тĕллев тытрăм. Ăна ăнсăртран хатĕрлемен, çитес çул Мăн Сĕнтĕр салин сумлă юбилей пулать. Çавна май пысăк парне хатĕрлес терĕм. Историе тĕплĕ çырса кăтартса вулакан патне паха кĕнеке çитерес тесе архив материалĕсемпе нумай ларма, чылай документа тишкерме тиврĕ. Кĕнекере ку тăрăхра вăй хунă тĕрлĕ сфера ĕçченне, малтанхи тата хальхи предприятисемпе учрежденисене, объектсене тишкертĕм, авалхи цифрăсене илсе кăтартрăм. Анчах та кĕнеке кăларассине вĕçне çитерме укçа-тенкĕ çитмест. Çавăнпа та район хаçачĕ урлă сирĕнтен укçан пулăшу ыйтатăп. Пулăшакансене вара кĕнеке парнелеме шантаратăп. Сирĕн хушăра ырă чунлă çынсем пуррине ĕненетĕп, çавăнпа та кĕнекене вулакан патне вăхăтра çитересси пирки питĕ ĕмĕтленетĕп.

**Валерий ИВАНОВСКИЙ.**

Культура çулталăкĕнче

# Тирпей, илем – хамăршăнах

Паянхи куна илес пулсан эпир Муркаш урамĕсемпе иртнĕ май кашни юпа çумне çитсе чарăнса тăратпăр. Ара вĕсем çинчен тĕрлĕ хыпар-пĕлтерÿ пĕлме май пур вĕт-ха! Юпасем пĕлтерÿсен хăми вырăннех пулса тăнă. Кам мĕн сутать, туянать, ăçта мĕн пулать т. ыт. те – йăлтах юпасем "пĕлтереççĕ". Акă епле вăл Культура çулталăкĕнчи пирĕн культура шайĕ?

Шел пулин те, çакăн пек "культура" тĕрлĕ шайри "халăх тарçисене", паянхи куна илес пулсан, нимĕн чухлĕ те пăшăрхантармасть пулас. Суйлавсен тапхăрĕнче кăна вĕсем пурте "чĕрĕлсе тăраççĕ, куçĕсем усăлаççĕ". Çакса пăх-ха вăл вăхăтра пĕр-пĕр кандидат е парти представителĕ пирки пĕр "хут татăкĕ" палăртнă вырăнтан кăшт аяккарах, "саккунсем ĕçленине" тÿрех туйса илетĕн. Айăплине те питĕ хăвăрт шыраса тупаççĕ, явапне те çийĕнчех тыттараççĕ.

Яланах çапла пулмалла пек те, çук çав. Пурăна киле каллех пĕтĕмпех манăça тухать. Кун пек ÿкерчĕк район центрĕнче кăна мар, ял тăрăхĕсенче те çавăн пекех. Нивушлĕ вара пĕлтерÿсен валли ятарлă вырăнта пĕлтерÿ хăмисем вырнаçтарса памалла мар? Тирпейлĕх, илем хамăршăнах вĕт-ха. Культура çулталăкне чăнласах культурăпах вĕçлесчĕ. Пĕлтерÿ хămисем малашне район çыннисемпе хăнисене хăйсем патне кăмăллăн "йыхравлассине" шанас килет.

**Игорь МАЙКОВ.**

Кашмаш ялĕ.

# П. Давыдов ячĕпе – пĕрремĕш хут



"Çакăн пек çынсене пирĕн яланах асра тытмалла", – тесе палăртрĕ район администрацийĕн пуçлăхĕ Ростислав Тимофеев Раççей Федерацийĕн ял хуçалăхĕн тава тивĕçлĕ ĕçченне Платон Павлович Давыдова асăнса ирттернĕ пĕрремĕш ăмăртăва уçнă май.

Ăмăрту октябрĕн 11-мĕшĕнче Муркашри "Сывлăхра" пулчĕ. Çак кун ачасемпе çамрăксен спорт шкулĕ – "Сывлăх" ФСК-ра шăпах уçă алăксен кунĕ иртрĕ. Унăн директорĕ Александр Куликов ЧР Пуçлăхĕн М. Игнатьевăн Указĕпе килĕшӳллĕн республикăра кашни уйăхра ирттерекен Сывлăхпа спорт кунĕнче "Сывлăх" та районти пур çынна хăйĕн услугисемпе тӳлевсĕр тивĕçтернине палăртрĕ. Çав кунах Шупашкарта Пĕтĕм тĕнчери "Раççей – спорт çĕршывĕ" форум хăйĕн ĕçне вĕçлерĕ. Вырсарни кун вара Раççейре Ял хуçалăх ĕçченĕн кунне паллă турĕç. Çапла Платон Павлович Давыдова асăнса ирттерме шутланă спорт мероприятийĕ питĕ вырăнлă пулчĕ. Мĕншĕн тесен çак хастар та пултаруллă ертӳçĕ хăйĕн пурнăçне пĕтĕмпех тăван хуçалăха аталантарассишĕн панă, унăн ывăлĕ Александр Давыдов каланă тăрăх – спорта та кăмăлланă.

Районăн социаллă пурнăçĕпе экономикине аталантарас тесе юлашки кунсемччен ырми-канми тăрăшнă ертӳçе, унăн пархатарлă ĕçне



аса илсе район администрацийĕн пуçлăхĕ Ростислав Тимофеев çак ăмăрту районта ырă йăлана кĕрессе шанса каларĕ. Волейбол ăмăртăвĕ çулталăкра 20 ытла пулин те, çак турнира та районти ăмăртусен календарьне кĕртессе пĕлтерчĕ. Апла пулсан вăл манăçа тухмалла мар.

Пĕрремĕш хут иртекен ăмăртăва пурĕ 11 команда пухăнчĕ. ФСК спортзалне шкул ачисем те, ветерансем те хăйсен командисемпе пуçтарăннă. Вĕсене тата районти ертӳçĕсене Платон Павловичăн ывăлĕ, депутатсен районти Пухăвĕн депутачĕ Александр Давыдов тав сăмахĕ каларĕ.

– Эпир çак турнира тахçанах ирттерме палăртнăччĕ, анчах та халĕ хатĕрленсе çитрĕмĕр. Кунĕ те ахаль кун мар – Ял хуçалăх ĕçченĕн кунĕ умĕн, – палăртрĕ вăл. – Эпир пирĕн çавăн пек атте пулнипе чăнах та мăнаçланатпăр. Вăл яланах пирĕн чĕрере, асра. Район çыннисем, спорта юратакансем те ăна асра тытасса шанатпăр.

Платон Павловичпа пĕр вăхăтра ĕçленисем те ăмăртăва чылайăн çитнĕччĕ. Акă районăн Хисеплĕ çынни В. Краснов, Е. Андреев ячĕпе хисепленекен хуçалăхăн ертӳçи В. Семенов, БТИ ертӳçи – районти волейбол федерацине ертсе пыракан В. Калинин та хăйсен сăмахĕнче унăн паха енĕсене асăнмасăр иртмерĕç.

Мускавра ĕçлесе пурăнакан Людмила хĕрĕ те (тĕп хулари 19 номерлĕ Ача çурчĕн директорĕ, медицина наукисен кандидачĕ) хаваспах тăван района çитнĕ. Вăл каланă кашни сăмах чĕререн тухни палăрчĕ.

– Çак турнир пирĕншĕн, пирĕн çемьешĕн, питĕ пĕлтерĕшлĕ, пирĕн тăван кĕтесшĕн, тăван районшăн та. Ӳсекен çамрăк ăрушăн та пĕлтерĕшлĕ.

